27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
30
ВЫРСАРНИКУН
86(6681) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ленин ялавĕпе, Сталин ертсе пынипе—малалла, нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕрсе тăкма тата вĕсене пирĕн Тăван çĕршывран хăваласа кăларма!

(1944 çулхи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе ЦК ВКП(б) чĕнсе каланисенчен)

Майăн 1-мĕшĕ—ĕççыннисен кĕрешӳри вăйĕсене пăхса тухмалли кун

Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем кăçал Майăн 1-мĕшне фашистла империализма хирĕç пыракан кĕрешӳсен вăхăтĕнче паллă тăваççĕ. Фашистла нимĕç захватчикĕсем пусмăрла кĕртсе ӳкернĕ Европăри халăхсем хăйсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн вăй-хăвата шеллемесĕр кĕрешеççĕ.

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем Майăн 1-мĕшне çапăçу хирĕсенче тăшмана хирĕç хаяррăн кĕрешнĕ вăхăтра, этемлĕхĕн тăшманне — фашистла захватчиксене — çĕмĕрсе тăкассишĕн пĕтĕм вăй-хăвата мобилизацилენĕ вăхăтра паллă тăваççĕ.

Виççĕмĕш хут ĕнтĕ май уявне вăрçă вăхăтĕнче паллă тăватпăр. 1942 çулта, Отечественнăй вăрçăн вунпĕрĕмĕш уйăхĕнче, эпир май уявне пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар Тăван çĕршывăн столици Мускав патĕнче çĕнтерӳ тунишĕн саванса паллă турăмăр. 1943 çулта эпир май уявне Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнчи аслă çапăçăва çĕнтерӳллĕн вĕçленипе паллă турăмăр. 1944 çулхи май уявне эпир Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ историллĕ çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илетпĕр.

Мухтавлă Хĕрлĕ Çар хăватлăн наступлени туса пынипе тăван Украинăна пĕтĕмпе тенĕ пекех, Белоруссин çĕрне тата Ленинградпа Калинин облаçĕн пысăк пайне ирĕке кăларнă. Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене пĕтерсе тăкмаллах пыра-пыра çапса Совет Союзĕн государство чиккине тухрĕ те тăшмана хăйĕн çĕрĕ çинчех аркатса пыма тытăнчĕ.

Пирĕн тăван Хĕрлĕ Çар çак историллĕ çĕнтерӳсене совет ĕççыннийĕсем тылра паттăррăн ĕçленипе пула тума пултарчĕ. **«Çирĕппĕнех çапла калама пулать: совет ççыннисем тылра вăя шеллемесĕр ĕçлени, Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕпе пĕрлех, тăван çĕршыва хӳтĕленĕ çĕрте халăх нихăçан пулман паттăр ĕç тунине кăтартса историне кĕрсе юлать»** (СТАЛИН).

Совет халăхĕ май уявне кĕрешӳсенче ӳссе çирĕпленнĕ хăватпа кĕтсе илет. Совет Союзĕнчи халăхсен паттăр çемьинче пирĕн Ленин орденлĕ Чăваш республикинчи ĕççыннисем те этемлĕхĕн тăшманне çĕнтерес ĕçшĕн вăй-хăвата шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Республикăри промышленноçпа транспорт предприятийĕсенчи рабочисемпе служащисем тата инженерла-техникла работниксем, колхозниксемпе колхозницăсем, ялхуçалăх специалисчĕсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе хăйсен фронтри паттăр ывăл-хĕрĕсене çĕнтерӳ тума пулăшса тăраççĕ.

Нумай предприятисен коллективĕсем май уявне производство планĕсене ирттерсе тултарнипе кĕтсе илеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем фронтпа çĕршыва ялхуçалăх продукчĕсем парса тăрас ĕçре çĕнĕ те çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Республикăри колхозсем иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш премин илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерӳсем тата совет халăхĕ ĕçре тунă çĕнтерӳсем питех те пысăк. Çĕнтерӳсен хăватлă вăйĕ—фронтпа тыл тачăн пĕтĕçсе ĕçленинче. Фронтпа тыл хушшинчи çыхăнăва пирĕн малалла та çирĕплетсех пымалла.

Эпир фронтра чаплă çĕнтерӳсем турăмăр. Анчах вăрçă пĕтмен-ха. Фашистла вăрă-хурахсем, хăйсен кунçулĕ пĕтсе пынине кура, хаяррăн хирĕç тăраççĕ.

Çĕнтерӳ çывăх ĕнтĕ. Анчах ăна алла çавăрса илес тесен, çĕнĕрен вăй ытларах хуни, пĕтĕм тыл хăйне шеллемесĕр ĕçлени, фронтра Хĕрлĕ Çар пĕлсе тата таткăн кĕрешни кирлĕ. Çапла вĕрентет пире аслă çĕнтерӳсен организаторĕ аслă çулпуç Сталин юлташ.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ, 1944 çулхи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе чĕнсе каланисенче совет халăхĕ умĕнче вăрçа çĕнтерӳллĕн вĕçлес тĕллевпе тăракан задачăсене кăтартса парса, совет халăхне пĕтĕм вăй-хăвата мобилизацилеме чĕнчĕ.

Фабрик-заводсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем, Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшалсемпе вăрçă техники ытларах туса кăларăр. Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ тума!

Халĕ республикăри колхозсем уйăхрĕсенче çурхи хĕрӳллĕ ĕçсем пыраççĕ. Колхоз хресченĕсем Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче хăйсем Тăван çĕршыва чĕререн парăннине уçăмлăн кăтартса пачĕç. Вĕсем халĕ çуракине кăтартуллă ирттерсе çĕршывпа фронт валли апат-çимĕç çителĕклĕ парассишĕн кĕрешеççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем, агрономсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницăсем, çуракине кăтартуллă ирттерĕр, колхозсемпе совхозсенче малта тăракан агротехникăна пурнăçа кĕртсе пырăр! Тырпул тухăçлăхне ӳстерер, пĕрчĕллĕ тырăсем тата ялхуçалăхĕнчи ытти культурăсене ытларах пухса илер! Фронтпа çĕршыва — апат-çимĕç, промышленноçа — чĕртавар ытларах туса парар!

Ыран, Майăн 1-мĕшĕнче, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем, хăйсен пĕтĕм ĕçĕсене тишкерсе тухса, нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкмалли задачăсене палăртаççĕ. Аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ çĕнтерӳ тăвассишĕн пĕтĕм вăй-хăвата хурса ĕçлеме чĕннине совет халăхĕ яланах асра тытать.

Пысăк йывăрлăхсене тӳссе ирттернĕ совет халăхĕ, хăйĕн телейлĕхĕпе ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешнĕ çĕрте паттăрлăх кăтартнă совет халăхĕ пулас телейлĕхĕ çине çирĕппĕн шанса тăрать. Ыран Майăн 1-мĕшĕнче—совет халăхĕ тулли кăмăлпа çапла саламлать:

Сывă пултăр Майăн 1-мĕшĕ—ĕççыннисен кĕрешӳри вăйĕсене пăхса тухмалли кун! Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем, фашистла нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкассишĕн кĕрешме пĕрлешĕр!

Фашистла ирсĕрсене хамăрăн Тăван çĕршывран ăнăçлăн хăваласа кăларакан аслă совет халăхĕ, унăн геройла Хĕрлĕ Çарĕпе паттăр Тинĕс-Çар Флочĕ сывă пулччăр!

Сывă пулччăр совет мухтавлă партизанĕсемпе партизанкисем!

Сывă пултăр пирĕн çĕршыври халăхсен никам аркатайми туслăхĕ!

Ленин ялавĕпе, Сталин ертсе пынипе—малалла, нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕрсе тăкма тата вĕсене хамăрăн Тăван çĕршывран хăваласа кăларма!

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 28-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусем пулман.

Апрелĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 22 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 29 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ЛЬВОВ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ТАПАННИ

Апрелĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене çӳрекен авиаци йышлăн вĕçсе кайса Львов чугун çул узелне тапаннă, тăшманăн çар эшелонĕсем пĕр çĕре пухăнса тăнă вырăнсене бомбăсем пăрахнă. Чугун çул узелĕнче пушарсем нумай тухнă, пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн летчиксем тăшманăн Львов хули районĕнчи аэродромне хупăрласа илнĕ. Львов хулине каякан çулсемпе пынă нимĕç автомашинисен колоннийĕсене пулеметсемпе тата тупăсемпе пенĕ

☆ ☆ ☆

ТĂШМАНĂН ОРША ХУЛИ РАЙОНĔНЧИ АЭРОДРОМĔ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Апрелĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Орша хули районĕнче вырнаçса тăракан тăшман аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă. Пирĕн самолетсем тапăннă вăхăтра аэродромра нимĕç самолечĕсем нумай пулнă. Бомбăсем пăрахнипе пулна 15 тĕлте вăйлă пушарсем тухнă. Тăшман самолечĕсем тата горючипе боеприпас складчĕсем сунă. Пушарсенче темиçе вăйлă взрыв пулнă. Оршаран каялла вĕçсе кайнă чухне пирĕн летчиксем çав пушарсене 100 километртан та курнă.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре нимĕçсемпе венгерсен çарĕсем пирĕн позицисене темиçе хут та атакăланă. Пирĕн чаçсем тăшмана артиллерипе минометсен вучĕпе сунтарма тытăннă. Гитлеровецсене пысăк сухатусем тӳстернĕ, вара вĕсем каялла чакнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 800 вилли ыйла выртса юлнă тата персе çĕмĕрнĕ 10 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупă тăрса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем, Бойцов юлташ командир пулса ертсе пынипе, тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр туса, тăшманăн тĕреклетнĕ пункчĕнчи гарнизонне аркатса тăкнă. Гитлеровецсене икĕ ротăна çитти пĕтерсе тăкнă. 12 хир тупи, хăй тĕллĕн çӳрекен 2 тупă тата боеприпассемпе çар пурлăхĕ турттарса пыракан 40 автомашинăна тытса илнĕ. Венгерсен 400 салтакне тытăна илнĕ. Тытăна илнĕ венгр салтакĕсем каласа кăтартнă тăрăх, венгер салтакĕсем çав кунсенче атакăна кайма килĕшмен. Вара венгр чаçĕсем хыçне нимĕç пулеметчикĕсемпе автоматчикĕсенчен ятарласа тунă отрядсем тăратнă.

Пирĕн ротăна резервра тăраттăмччĕ, лекнĕ командирĕ Вальтер Штраус капитан çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ хам ротăпа резервра тăраттăмччĕ. Кĕтмен çĕртен пире вырăс танкĕсем атакăлама пуçларĕç. Темиçе минут хушшинчех вара пирĕн ротăна аркатса тăкрĕç». Çав батальонри 1-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ Бош лейтенант çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн батальон питĕ хăвăрт каялла чакса пычĕ, анчах çапах та вырăс танкĕсем пире хăваласа çитрĕç. Çав вăхăтрах пире хыçалтан партизансем тапăнчĕç. Çапла эпир унка кĕрсе ӳкрĕмĕр, вара парăнтăмăр. Пирĕнпе пĕрле тыткăна 98-мĕш дивизири 282-мĕшпе 290-мĕш полксен подразделенийĕсем тата нимĕçсен 73-мĕш пехотнăй дивизийĕн çапăланса кайнă салтакĕсен ушкăнĕсем те парăнчĕç». Нимĕçсен 198-мĕш артиллери полкĕнчен тыткăна лекнĕ Курт Хартюндер лейтенант çапла каласа кăтартнă: «Вырăссен артиллерийĕ пирĕн полкăн командăнăй пункчĕсене пĕтерсе тăкрĕ, пирĕн батарейăсене пусарса лартрĕ. Штабсем хушшинчи çыхăну пĕтĕмĕшпех пĕтсе ларчĕ. Вара кашниех тарса çăлăнса юлма тăрăшрĕ. Крымран тухса кайма питĕ йывăр пулнине эпир пурте лайăх пĕлсе тăраттăмăр, анчах пире кун пекех вăйлă аркатса тăкассине никам те кĕтмен. Крымри катастрофа нимĕç командованийĕн стратегийĕ пĕтĕмпех юрăхсăра тухнине кăтартрĕ».

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтра пирĕн авиаци çаплах тăшманăн чугун çул çинчи эшелонĕсене пыра-пыра çапнă. Кун касинчен совет летчикĕсем 3 паровозпа 50 вагон çĕмĕрсе тăкнă тата горючи турттарса пыракан 3 эшелона сунтарса янă. Ытти 90 бензин цистернине ялăн пĕтнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Финн заливĕнче тăшманăн 6.000 тонна таякан танкерне тата пĕр тральщикне шыва путарнă.

Хура тинĕс флочĕн авиацийĕ Севастополе пырса кĕмелли вырăнсенче тăшманăн 1000 тонна таякан суднине тата хăвăрт çӳрекен десант баржине шыва путарнă, ытти икĕ суднине сиенленĕ.

* * *

Львов облаçĕнче кĕрешекен партизансен ушкăнĕ çĕрле çар склачĕсем сыхлакан нимĕç салтакĕсене тапăннă. Кĕске тытăçура совет патриочĕсем 20 гитлеровеца вĕлерсе тăкнă, вара тăшманăн икĕ пысăк складне вут тĕртсе янă. Львов партизанĕсен тепĕр ушкăнĕ виçĕ кун хушшинче нимĕçсен чугун çулпа пыракан икĕ эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче 200 гитлеровеца çити пĕтнĕ. Ку участокра поездсем çӳресси вара икĕ кунлăха чарăнса ларнă.

* * *

Крымра нимĕçсен 98-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтаксемпе офицерсен пысăк ушкăнне тыткăна илнĕ. 198-мĕш саперпăй батальонри 3-мĕш ротăн тыткăна

* * *

Аялараx фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Могилев облаçĕнчи Горы ятлă ялта тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Гитлеровецсем Горы ялĕнче халăх пурăнакан 243 пӳрте, вăтам шкула, культура çуртне тата библиотекăна çунтарса ячĕç. Хăйсем пуç пулса тăнă вăхăтра нимĕç вăрă-хурахĕсем мирлĕ халăха темиçе çĕр çынна вĕлерчĕç. Фашистсен палачĕсем пĕр кун хушшинче кăна йĕтĕн сӳсĕ хатĕрлекен завод районĕнче 200 совет гражданне ялăн персе пăрахрĕç. Хӳтлĕхсĕр тăрса юлнă пĕр ачăпсăр çынсене нимĕçсем питĕ пысăк шăтăк патне иле-иле пыратчĕç те аялалла пăхса вырттма хушатчĕç, вара вĕсене пулеметсемпе персе пăрахатчĕç. Комисси çавăн пек пĕр пысăк шăтăка уçса пăхнă. Комиссире çаксем пулнă: суд медицинин экспертĕ—медицина служби капитанĕ Макаров, старши лейтенант Чумаков тата Дендиберовпа Кобзеева врачсем. Çав шăтăкра нимĕç ирсĕрĕсем персе пăрахнă ватă çынсен, хĕрарăмсен тата арçынсен 150 виллине ялăн тупнă».

Акт çине çаксем алă пуснă: партизансен отрячĕн командирĕ Н. Кохов, Горецки райисполком председателĕн заместителĕ Г. Тарасенко, учительницăсем — А. Эренбург, М. Дыленок, Н. Павлючкова.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Çĕмĕрле комбинатĕнчи рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Чăваш АСС Республикинчи Çĕмĕрле комбинатĕнчи производство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ çĕрте уйрăмах палăрнă çак рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Иван Семенович **Антонова** — слесаре.
2. Евгений Федорович **Аючатова** — токаре.
3. Сергей Александрович **Аликина** — моториста.
4. Раиса Афанасьевна **Бабенковăна** — мастера.
5. Владимир Петрович **Бабина** — цех начальникне.
6. Иван Константинович **Баторщина** — отдел начальникне.
7. Иван Николаевич **Блинова** — отдел начальникне.
8. Филипп Ефимович **Болотова**.
9. Екатерина Федоровна **Брачевăна** — лабаранта.

(Малалли пулать)

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

Канаш тата Красноармейски районсенче çураки ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ Канаш районĕпе Красноармейски районри колхозсенче çураки ĕçĕсем мĕнле пынине пăхса тухнă. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çав районсенче çураки ĕçĕсем питĕ япăх пынине палăртнă. Пур колхозсенче те çĕре сухалама юрать пулин те, ВКП(б) райкомĕсем, райисполкомсем, район çĕрĕç пайĕсем тата колхоз председателĕсем халĕ те çĕре суйласа сухаласси çинчен калаçаççĕ, çураки ĕçĕсене анлăн сарса яман, суртырисем акмалли чи лайăх вăхăта сая яраççĕ. Çапла, акă, Канаш районĕнче апрелĕн 27-мĕшĕ тĕлне 49 колхозран 29 колхоз çеç çураки ĕçĕсене пуçăннă, 33 трактортан 7-шĕ çеç ĕçлеме пуçланă, 2-мĕш номер трактор бригади халĕ те хире тухман-ха. Красноармейски районра 9 колхоз халĕ те суртырисем акма тытăнман, хиртре 38 трактортан 18-шĕ çеç ĕçлеççĕ.

Çапла ĕçленине пула Канаш районĕнче мĕн пурĕ 420 гектар çеç акнă, Красноармейски районра вара 385 гектар çеç акнă. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ пирки йышăннă решенире вырăнти çĕрĕç органĕсене, партипе совет организацийĕсене, колхозсемпе МТС-сене ялхуçалăх ĕçĕсене нумай лайăхлатма хушнă. Анчах çуракине тухнă нумай колхозсем малтанхи кунтан пуçласах агротехникăна питĕ хытă пăса пуçланă: ăшăх сухалаççĕ, вăрлăха начар варса пыраççĕ, начар тасатнă тата чӳхемен вăрлăх акаççĕ, вăрлăхсене яровизацилессине организацилемен, хирсене çумкурăкĕсемпе кăмăлсенчен тасатмаççĕ.

Уйрăм колхозсен руководителĕсем çураки ĕçĕсене начар туса пынине тата СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) кăтартса панă ĕçсене пурнăçламаннине лашасем начаррипе ăнлантарма хăтланаççĕ. Çакна хирĕç ВКП(б) райкомĕсем çителĕклĕ вăйлă кĕрешмеççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн XVIII-мĕш пленумĕ трактор сеялкисемпе тата лаша кӳлекен сеялкăсемпе туллин усă курма хушса хăварнă пулин те, нумай колхозсем алăпа акаççĕ, сеялкисем ĕçсĕр лараççĕ. Кĕрхи тырăсене апат парас тата сӳрелес ĕçе те начар организациленĕ.

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) колхозсенче вăрлăх акса тăвас ĕçе лайăхлатма хушнине колхозсем питĕ япăх пурнăçлаççĕ. Хăшпĕр колхозсенче вăрлăх участокĕсем валли халĕ те çĕр уйăрса хуман, лайăх сортлă вăрлăхсене суйласа илмен, вăрлăх акса ӳстерес ĕçшĕн ответлă пулса тăракан çынсене уйăрса хуман, вăрлăх ӳстерекен звеносем организацилемен.

Канаш, Красноармейски районсен руководителĕсем çураки вăхăтĕнче ĕçе лайăх организацилесси çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхмаççĕ. Нумай колхозсенче пурте пĕрле ĕçлеççĕ, яланхи звеносем туман, ĕç кунне йĕркелемен, ĕçе кая юлса тухаççĕ, ĕçрен ир таврăнаççĕ, çавăн пирки унта ĕç тухăçлăхĕ начар.

Хăшпĕр колхозсенче хирти ĕçсене çитĕнсе çитмен çамрăксем çеç тăваççĕ, çитĕннĕ колхозниксемпе колхозницăсене суха ĕçне явăçтарман. Правленисен чылай членĕсем тата администрацине тытăм аппаратĕнче ĕçлекен ытти колхозниксем хирти ĕçе хутшăнмаççĕ. Хăшпĕр колхозсен председателĕсем тата уйхир бригадирĕсен бригадирĕсем хире сайра тухаççĕ, вăхăта канцелярисенче ларса ирттереççĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем колхозсене çуракине ирттермелли ĕç планĕсем тутарман, нумай колхозсенче агротехника ĕçĕсене палăртса хуман. Канаш, Красноармейски МТС-сен директорĕсем колхозсемпе халь те договорсем туса çитермен-ха.

Çак питĕ пысăк ситменлĕхсем акă мĕн пирки пулнă: ВКП(б) Канаш, Красноармейски райкомĕсем колхозниксемпе МТС работникĕсем хушшинче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановленине лайăх ăнлантарса паман, вĕсене çав питĕ паха решение пурнăçлама мобилизацилемен. Чылай колхозсем Калинин облаçĕнчи «Красный путиловец» колхоз чĕнсе каланине сӳтсе-явман, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнман.

ВКП(б) райкомĕсем партипе комсомол организацийĕсен çуракинчи ĕçĕсене начар ертсе пыраççĕ, агитаторсен ĕçĕсене тĕрĕслемеççĕ. Партин хăшпĕр ялсенчи пуçламăш организацийĕсем çуракинче малта вырăнта пымаççĕ. Нумай колхозсенче коммунистсемпе комсомолецсем администрацине хуçалăх ĕçĕсенче ĕçлесĕ, хире тухмаççĕ.

Ĕçе тĕрĕслени çакна кăтартнă: çавăн пек ситменлĕхсем Чкаловски, Комсомольски тата ытти районсенче те пур.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

1. ВКП(б) Канаш тата Красноармейски райкомĕсен секретарĕсене Добродушевпа Григорьев юлташсене вĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановленине питĕ начар пурнăçлаççĕ тата çураки ĕçĕсене начар ертсе пыраççĕ тесе çирĕп кăтартса хăварнă.

2. ВКП(б) райкомĕсене çав кăтартнă ситменлĕхсене халех пĕтерме тата çуракине ăнăçлăн ирттерме хушнă.

3. Колхозсен руководителĕсен пурин те çураки ĕçĕсене халех пуçăнмалла. Хирти ĕçсенче мĕнпур лашасемпе, ĕç вăкăрĕсемпе, çавăн пекех тата колхозсемпе колхозниксен ĕнисемпе усă курмалла. Ĕç выльăхĕпе лайăхрах усă курма пултăр тесе, ăна хиртех апатлантармалла, хирсем инçе пулсан—кăнтăрлахи апата та хиртех тумалла.

4. МТС директорĕсен мĕнпур тракторсене халех хире ямалла. Тракторсене икĕ сменăпа ĕçлеттермелле, талăкра вĕсен 20 сехетрен кая мар ĕçлемелле.

Тракторсем юсавлă пулман пирки вĕсем хирте хăшпĕр чухне ĕçсĕр ларнине шута илсе, тракторсене хиртех юсамашкăн кашни 15—20 трактор пуçне куçса çӳрекен пĕр мастерской организацилемелле.

Трактор бригадисенче горючие тата сĕрмелли материалсене лайăх пăхса усрамалла. Вĕсем валли кашни бригадăрах çивиттисем тата нӳхрепсем тумалла.

5. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен ăшăх сухаланине, вăрлăхсене начар варса пынине, тасатман тата чӳхемен вăрлăхсем акнине, çавăн пекех ытти ситменлĕхсене те халех пĕтермелле

Хирти ĕçсене çитĕннĕ колхозниксемпе колхозницăсене явăçтармалла. Колхозсен администрацине тытăм аппаратĕнче ĕçлекен çыннисене те хире сухалама тата акма ямалла. Опытлă старикĕсенчен пахалăх инспекторĕсем уйăрса хумалла, çав инспекторсен çураки ĕçĕсене мĕнле пахалăхпа тунине тĕрĕслесе тăмалла.

6. Кашни колхозрах суртырисем акаччен чи лайăх çĕрсем çинче вăрлăх участокĕсем уйăрса хумалла, çав участоксене тĕплĕн сухаласа сӳрелемелле, унта чи лайăх йышши вăрлăхсем акмалла. Ялан ĕçлекен вăрлăх звенисем тумалла, çав звеносен вăрлăх участокĕсенчи мĕнпур ĕçсене (вăрлăх акассинчен пуçласа çапса илнĕ вăрлăха тасатасси таранах) туса тăмалла.

7. Çуракинче колхозниксен ĕç тухăçлăхне нумай ӳстермелле. Çакна тумашкăн кашни çынна сдельщина йĕркипе ĕçлеттерсе тӳлемелле, кашни сухаçă тата акакан мĕнле ĕçленине куллен кăтартса тăмалла. Ушкăнпа ĕçлес йĕркене пĕтермелле.

8. Кашни колхозрах Калинин облаçĕнчи «Красный путиловец» колхоз чĕнсе каланине сӳтсе-явмалла. Çуракине ăнăçлăн ирттерес, 1944 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илес тĕлĕшпе колхозсен, бригадăсен тата колхозниксен социализмлă ăмăртăвне анлăн сарса ямалла. Социализмлă ăмăртăвăн результачĕсене куллех шута илсе пымалла, вĕсене пур колхозниксене те кăтартмалла, хăйсен нормисене ирттерсе тултаракан колхозниксемпе колхозницăсене пур майпа та хавхалантармалла.

ВКП(б) райкомĕсен тата партин ялсенчи пуçламăш организацийĕсен секретарĕсен коммунистсемпе комсомолецсене сухалама, сӳрелеме, акма ярас пулать. Кашни коммунистпа комсомолецăн пысăк ĕç тухăçлăхĕн тĕслĕхĕсене кăтартмалла, социализмлă ăмăртăва сарса, вăйлатса пыракансем пулмалла, вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăйпа кĕрешмелле.

ВКП(б) райкомĕсем партипе комсомолăн ялсенчи организацийĕсен çураки вăхăтĕнчи ĕçĕсене куллĕнех тĕрĕслесе ертсе пымалла, вĕсене массăллă-политикăллă ĕçе йĕркелеме тата социализмлă ăмăртăва сарса пыма пулăшмалла. Колхозниксене паттăр Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем çинчен куллен пĕлтерсе тăмалла, вĕсене çуракине кĕске срокра тата лайăх туса ирттермешкĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме мобилизацилемелле.

«Красная Чувашия» хаçатпа «Чăваш Коммуни» хаçатăн республикăра çураки мĕнле пынине вăхăтра тата анлăн çутатса пымалла. Лайăх ĕçлекенсене палăртмалла, начар ĕçлекенсене, агротехника правилисене пăсакансене пĕр шеллемесĕр хĕртмелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Чăваш АСС Республикинчи колхозсенче 1944 çулта сад пахчисемпе çырла пахчисене чĕртмелли тата çĕнĕрен лартмалли плана пурнăçламалли мероприятисем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ республикăра чылай районсенчи малта пыракан колхозсем, сад пахчи ĕрчетнин пĕлтерĕшне тĕрĕс хакласа, 1943 çулта колхозсенчи обществăллă сад пахчисене лартас тата колхозниксен, рабочисемпе служащисен кил вырăнĕсенче сад пахчисем ĕрчетес ĕçепе чылай палăрмаллах ĕçлерĕç. Республикăри колхозсенче сад пахчисемпе çырла пахчисене пурĕ 546 гектар çĕр лаптăкĕ çинче лартнă тата киввисене чĕртнĕ, колхозниксен кил вырăнĕсене 46.000 тĕп çимĕç йывăççисене лартнă.

Кивĕ сад пахчисене чĕртес ĕçепе Сĕнтĕр районĕ чылай ĕçленĕ. Унта 86 гектар çинче сад ĕрчетнĕ, Ишлей районĕнче — 30 гектар, Канаш районĕнче — 46 гектар тата Советски районра 42 гектар çине çимĕç йывăççисем лартнă.

Анчах советсен, çĕрĕç тата партин нумай органĕсем сад пахчисемпе çырла пахчисене ĕрчетес тата чĕртсе ярас ĕçсене тивĕçлипе хакламаççĕ, çак ĕçсене вăрçă хыççăн тума пулать тесе шутлаççĕ. Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски, Красноармейски тата Тăвай районĕсем 1943 çулта сад пахчисем ĕрчетес ĕçепе ĕçлемен, сад пахчисемпе, çырла пахчисем лартмалли плана тултарман.

Государствăн тата колхозсен питомникĕсем, лартмалли паха материалсем парса тăма тивĕçлĕскерсем, çамрăк çимĕç йывăççисем лартса тăвассине нумай чакарнă. Хăшпĕр çĕрĕç пайĕсем колхозри питомниксене ертсе пыма пачах пăрахнă пирки, юлашки çулсенче хăшпĕр питомниксем лартмалли çамрăк йывăççисем тума пачах чарăннă. (Куславкка районĕнчи «Большевик» колхоз, Пăрачкав районĕнчи «Восход» колхоз тата ыттисем те). Чăваш АССР Апат-çимĕç Халăх Комиссариачĕн Элĕкри плодопитомникĕ те çак паха ĕçе тума пачах пăрахнă.

Сад пахчисене, çырла пахчисемпе çырла-çимĕç питомникĕсене 1944 çулта чĕртмелли тата лартмалли государство планне пурнăçа кĕртес шутпа, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райисполкомсене, ВКП(б) райкомĕсене тата колхоз правленийĕсене çаксене тума хушнă:

1. Колхозсен хăрсă пĕтнĕ сад пахчисене 600 гектар лаптăк çинче чĕртмелле, 100 гектар çинче сад пахчи çĕнĕрен лартмалла, 100 гектар çинче çырла пахчисем тата 10 гектар çинче плодопитомниксем тумалли плана пĕр пăркаланмасăр пурнăçламалла.

2. Республика Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ плодопитомниксенчен лартмалли çамрăк йывăççене пайламалли плана çирĕплетнĕ: улмуççисем 240.000 тĕп, чие çырли йывăççисем — 40.000 тĕп пайламалла, вăл шутран çуркунне лартма 140.000 тĕп улмуççи тата 25.000 тĕп чие çырли йывăççи памалла тăвас.

ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен тата çĕрĕç органĕсен лартмалли материалсене вăхăтра суйласа илессине организацилемелле, йывăççене çуркунне лартассине папкасем сараличчен туса ирттермелле, кĕркунне октябрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр лартмалла.

3. Çырла йывăççисен лартмалли материалĕсене кирлĕ таран хатĕрлес шутпа, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ çĕрĕç органĕсене колхоз питомникĕсен ĕçне йĕркелесе яма хушнă. Колхозри питомниксем ăçта вырнаçмаллине тата вĕсем кашни çул 280.000 тĕп çырла-çимĕç йывăççисен материалĕсем тумалли плана çирĕплетнĕ. Çакна тунă чухне хăвăрт çимĕç паракан çырла йывăççисене (çĕрçырли, хурлăхан, крыжовник) лартасси çине уйрăмăнах çаврăнса пăхмалли çинчен асăрхаттарнă, вĕсене сад-пахчинчи йывăççем хушшине тата йăрансем хушшине лартмалла.

4. Сад пахчинчи йывăççен тата çырласен вăрлăхĕсемпе сыпман йывăççем çитмен пирки, Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, государство плодопитомникĕсен директорĕсемпе колхоз правленийĕсене çаксене тума хушнă:

а) сыпмасăр çитĕннĕ йывăççене кăçал çуркунне паха йывăç турачĕсемпе сыпмалла. Туратпа сыпма май çук йывăççене çуркунне иртерех тĕпрен тухакан хунавсене тымар çумнерехрен касса çитĕнтерсе сыпмалла;

б) чие çырли тата сливă пек паха сортлă йывăççен вăррисене массăллăн пухассине организацилеме хушас, вĕсене вăра питомниксенче сыпмасăрах ÿстермелле тата çамрăк хунавсене питомниксенче ÿстерме хатĕрлемелле;

в) акса тунă çамрăк йывăççен тухăçне ÿстерес тата унăн пахалăхне ÿстерес шутпа, панулми йывăççисемпе грушăн çамрăк йывăççисене сыпмасăрах вăрлăхран ÿсекен вырăна лартмалла;

г) вăрмансенче хăй тĕллĕн ÿсекен çимĕç йывăççисен тата çавăн пекех китайка сортлă улмуççисен вăрлăхĕсене пухас шутпа, вĕсем ÿсекен участоксемпе уйрăм йывăççене шута илме хушас.

5. Чăвашторгплодоовощь тата çырласенчен çимĕç хатĕрлекен предприятисем китайка улма йывăççин тата хăй тĕллĕн ÿсекен йывăççен çимĕçĕсен вăрлăхĕсене пĕçерттерен уйăрса суйласа илессине организацилемелле.

6. «Сортсемовощĕн» Чăваш республикинчи уйрăмĕн çырла тата панулми хатĕрлесе çимĕç тăвакан предприятисемпе вăрлăх хатĕрлес ĕнĕпе договорсем вăхăтра тумалла.

7. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ райисполкомсене, ВКП(б) райкомĕсене, çĕрĕç органĕсемпе колхозсен правленийĕсене 1944 çулхи çуркуннерен пуçласа колхозниксен кил вырăнĕсенче 10—15 тĕп панулми йывăççи тата 20—25 тĕп çырла тĕмĕсем лартассине массăллăн пуçарса яма хушнă.

8. Районсенчи тата хуласенчи советсен исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсене 1944 çулта район центрĕсенче, хуласенче, рабочисен поселокĕсенче, çавăн пекех рабочисемпе служащисен пахча вырăнĕсенче, больницăсенче, шкулсенче, ача-пăча учрежденийĕсенче тата государство, обществăллă предприятисемпе организацисенче Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ çирĕплетнĕ плана пурнăçа кĕртес ĕнĕпе çимĕç йывăççисем лартма мерăсем йышăнмалла.

9. Йывăççене çуркунне лартассине ăнăçлăн туса ирттерес шутпа, кашни колхозрах яланлăха ĕçлеме садоводсем уйăрмалла, ĕç пысăкĕшне кура, сад пахчи звенисене тумалла. Сад пахчинче паха ĕçсем пынă чухне садоводсене ытти ĕçсене яма чарнă.

10. Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ колхозсенче сад пахчисен картисене ишсе çĕмĕрсе пĕтерпине пачах тĕрĕс мар тесе шутлаççĕ, çавна пула ĕнтĕ çимĕç паракан йывăççене выльăхсем çисе пĕтернĕ. Çавăнпа çĕрĕç органĕсемпе колхоз правленийĕсен обществăллă сад пахчисен картисене юсамалла е çĕнĕрен тумалла, çавăн пекех, чĕрĕ карта тăвас шутпа, сад пахчисем тавра йывăççем лартассине организацилемелле.

11. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ Çĕрĕç Халăх Комиссариатне тата районсенчи çĕрĕç пайĕсене сад пахчисене пăхса çитĕнтерес ĕçре çак тĕп агромероприятисене пурнăçлама хушнă:

а) çуркуннехи тапхăрта сад пахчисенче те йывăç хушшисене сухаламалла тата йывăç тĕпĕсем тавра тăпрана алтса çемçетмелле. Çуллахи вăхăтра çĕре 3—4 хутчен кăпкалантармалла тата çумкурăкĕсенчен тасатмалла.

б) вырăнти удобренисемпе (тислĕк, торф, компост, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, фекали, кĕл тата ытти те) сад пахчисенчи çĕре çемĕçтермелле, сад пахчисемпе питомниксене сиенлекен хурткăпшанкăсене хирĕç кĕрешес ĕçе тата йывăççен чирĕсемпе кĕрешес ĕçе организацилемелле.

12. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне районри çĕрĕç пайĕсенчи плодоовощевод-агрономсем уйăрса лартма тата вĕсемпе тÿрремĕнех çак ĕçре ĕçе хурма хушнă.

13. 1944 çулта июль уйăхĕнче Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ çумĕнче агроном-садоводсен квалификацине ÿстермелли курс ирттерме пăхнă, государствăн çырла-çимĕç питомникĕ çумĕнче колхозсенчи садоводсен 50 çынлăх курсне организацилеме пăхнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ колхозсенче, подсобнăй хуçалăхсенче тата колхозниксен, рабочисемпе служащисен кил вырăнĕсенче сад пахчисемпе çырла пахчисене хăвăрт чĕртесси тата сад пахчисене малалла та ĕрчетсе пырасси — халăх хуçалăхĕн пысăк та паха задачи тесе шутлаççĕ, парти организацийĕсене, çĕрĕç органĕсемпе колхозсен руководителĕсене сад пахчисене ĕрчетес ĕç çине тимсĕр пăхнине тата ялхуçалăхĕнчи çак ытла та паха ĕç юлса пынине пĕтерме хушаççĕ.

Çамрăксем малта пыраççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Типсырма ялсоветĕнчи «Пахарь» колхозăн çамрăкĕсем пур ĕçсенче те малта пыраççĕ. Конюхсем В. Игнатьев тата Т. Никитин юлташсем хăйсен ĕçĕсене кирлĕ пек туса пыни мĕнпур колхозниксене савăнтарать. Вĕсем пăхакан лашасем ыттисенчен тасарах та тĕреклĕрех.

Колхозри ытти çамрăксем те вĕсенчен юласшăн мар. В. Денисов, С. Романов, Г. Калистратов тата В. Павлова юлташсем бригадир хушнă ĕçсене яланах тĕплĕн пурнăçлаççĕ.

Т. Михайлов юлташ вут-кăвара кĕрешекен дружинăра ĕçлет. Час-часах колхозниксен килĕсене çÿрет, каткасемпе шыв лартнине, кăмакасемпе мăрьесене юсанине тĕрĕслет. Çавна пула халь кашни килĕрех каткасемпе шыв лартнă, урамсемпе килкартисенчи çÿп-çапсене тасатсах тăраççĕ.

М. ИЛЬИН.

Фашистла ирсĕрсене хамăрăн Тăван çĕршывран ăнăçлă хăваласа кăларакан аслă совет халăхĕ, унăн геройла Хĕрлĕ Çарĕпе паттăр Тинĕс-Çар Флочĕ сывă пулччăр!

(1944 çулхи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе ЦК ВКП(б) чĕнсе каланисенчен)

Ÿнерчĕк çинче: (сулахайран сылтăмалла): Виçĕ орден кавалерĕ **П. Д. Ди митриев**, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн кавалерĕ **А. В. Орлов** тата Хĕрлĕ Çăлтăрпа Хĕрлĕ Ялав орденĕсен кавалерĕ **Г. И. Макаров**. Вĕсем виççĕшĕ те Шăхасан районĕнчен. Вĕсемпе юнашарри — Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн кавалерĕ тата «За боевые заслуги» медаль илнĕ летчик, Етĕрне районĕнчи Мăн Йĕкĕт çамрăкĕ **И. И. Ядровкин**.

Вăрçă хирĕнчен килнĕ çырусем

1. „Мухтав“ орденĕн кавалерĕ

Атакăна кĕресси — çапăçури чи йывăр тапхăр. Атакăна малтан çĕкленекенĕн чĕри хурçă пек çирĕп пулмалла. Çавăн пек чĕреллĕ çынсене сахал мар куртăм эпĕ. Пирĕн салтаксем—пурте çавăн пек паттăрсем.

Энĕ сире хамăрăн землякăн Петр Порфирьевăн ĕçĕсемпе çеç паллаштарасшăн.

...Шурăмпуç çути киличчен пирĕн рота, «никамăн мар» уçланкă урлă упаленсе каçса, вĕтлĕх вăрманăн тепĕр хĕррине тухса выртрĕ. Вăрман çийĕнче çакăнса тăракан хура пĕлĕтсем, майĕпенех кăнтăралла шуса, çĕр питне карса илчĕç. Каç пулчĕ.

— Вăхăт,—терĕ рота командирĕ, тавралла пăхса илсе. — Тупăçă, мухмăр чĕртме хăяр ывăтса пар-ха. Хĕрхенсе мар, ытларах пултăр.

Пирĕн «хăярсем» нимĕçсем çинелле шăхăра-шăхăра ÿкме тытăнчĕç. Çав самантрах нимĕçсем çирĕпленсе ларнă çĕр çинче хура юпасем пĕрин хыççăн тепри пĕлĕтелле çĕкленме пуçларĕç.

Нимĕçсем те миномётсенчен пеме тытăнчĕç. Минăсем пĕр-пĕринпе сывăхах ÿке-ÿке çурăлнипе умра каçма çук хÿме пек тĕтĕм çĕкленчĕ.

Çак самантра виççĕмĕш çул вăрçă вут-хĕмĕнчен тухман командира та иккĕленÿллĕ шухăш çаврăса илчĕ. Вăл, юр ăшĕнче выртакан боецсем çине пăхса илчĕ те, атакăна çĕкленесси çинчен шутлама тытăнчĕ.

— Кам ман хыççăн чи пирвай çĕкленĕ-ши? — шутларĕ вăл. Анчах ун пек паттăр кĕтмен çĕртен, рота командирĕ атакăна тухма команда паричченех, палăрчĕ. Вăл Калинино çамрăкĕ Петр Порфирьев пулчĕ. Петр Порфирьев çĕкленнĕ хыççăнах старшина сиксе тăчĕ. Вара тăшман çине хăюллăн тапăнса каяс туйăм кашнин кăмăлне килсе кĕчĕ. Пĕр харăссăн çĕкленнĕ рота, тăшмана тинĕс хумĕ çырана пыра-пыра çапнă пек, пĕтĕм вăйран çапса хăй айне лÿчĕркесе чикрĕ.

Сур сехетрен, эпир нимĕç салтакĕсен виллисенчен тасатнă блиндажра канлĕн апат çиме тытăнтăмăр.

— Петр Порфирьев, — чĕнчĕ рота командирĕ. — Паянхи çапăçури паттăрлăхшăн сана «Мухтав» орденĕ илме тăратăп.

— Тăван çĕршывшăн кĕрешетĕп,— —ответлерĕ Порфирьев юлташ, пуля осколкĕсем шăтарса пĕтернĕ çăмламас çĕлĕкне тÿрлетсе.—Тăван çĕршывшăн пурнăçа пама та хатĕр!

Аслă лейтенант И. НИКИФОРОВ.

2. Сталинла сокол

Пĕр сехет ытла вĕçнĕ хыççăн пирĕн летчиксем Румынири пĕр хула патне çитнĕ. Вĕсем хушшинче пирĕн земляк, Етĕрне районĕнчи Мăн Йĕкĕт ялĕн çамрăкĕ, Иван Иванович Ядровкин юлташ пулнă.

Пирĕн летчиксем, задание ăнăçлăн пурнăçланă хыççăн, аэродрома таврăнма çул тытнă. Вĕсем хăйсем вĕçсе тухса кайнă аэродрома пурте тĕрĕс-тĕкĕл таврăннă.

Самолетсем аэродром çине ларнă вăхăтра ăнсăртран тăшман самолечĕсем курăнса кайнă. Ку вăхăтра Ядровкин сывлăшра пулнă. Тăшман самолечĕсене курсанах, вăл вĕсемпе çапăçăва кĕме шут тытнă. Ку хăрушă ĕç пулнă, мĕншĕн тесен тăшманăн виçĕ самолетне хирĕç пĕччен çапăçмалла пулнă. Çапах та Иван Ядровкин хăраман, çапăçăва хутшăннă. Кĕске вăхăтрах тăшманăн икĕ самолетне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр самолечĕ вара хăранипе хăвăртрах пĕлĕтсем хыçне кĕрсе тарнă.

Çак çапăçушăн пирĕн земляка Иван Иванович Ядровкин юлташа «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе наградăланă. Унтанпа нумай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Иван Иванович Ядровкин юлташ та нумай çапăçусенче пулнă. Вăл хамăр çĕршывăн телейлĕхĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн вăй-хăвата шеллемесĕр кĕрешет. Халĕ унăн кăкăрĕ çинче «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе «За боевые заслуги» медаль ялкăшса тăраççĕ.

Т. ЯРАНДАЙКИН.

3. Гвардеец Васильев

Аслă лейтенант Холодилов юлташăн батарейи оборонăра тăнă. Вĕсем минутран минутăнах нимĕçсем тапăнса пырасси кĕтнĕ, çавăнпа хăйсен туппися патĕнчен уйăрăлман.

Вăхăт нумай та иртмен. Тăшман танкĕсем пирĕн чаçсем çине тапăнса кĕнĕ. Çав вăхăтра батарея командирĕ боецсене хăйсен вырăнĕсене тăма хушнă. Нимĕçсен танкĕсем сăрт çине улăхсанах, пирĕн боецсем вĕсене тупăсенчен пеме тытăннă. Малтан пыракан танка коммунист Васильев юлташ çунтарса янă.

Çав самантрах пирĕн позицисем çине сылтăм енчен тупăсенчен персе тăнă. Васильев, хăрушлăха пăхмасăр, хăйĕн туппине сылтăм еннелле çаврăса, тăшмана пĕтерсе тăкнă. Çавăн чухне вăл аманнă. Анчах суранĕ ыратнине шута илмен вăл, тăшман çине персе тăнă. Юн нумай юхнă пирки тăнран тухнă. Пулăшу пана хыççăн тăна кĕрсен, тÿрех çапла ыйтнă:

— Мĕнле, нимĕç танкĕсене хăваласа ятăр-и?

Ку вăхăтра тăшман танкĕсем çапăçу хирĕнче пулман. Вĕсенчен пĕр пайĕ хирте çунса ларнă, тепĕр пайĕ сăртсем хыçне тарса çухалнă.

Васильев юлташа санитари пайне янă хыççăн гвардеецсем тăшманпа Васильев пек çапăçма çирĕп сăмах панăç.

Çапла, чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕ сержант Кузьма Васильев хăйĕн Тăван çĕршывĕ умĕнчи тивĕçне чыслăн пурнăça кĕртрĕ. Васильев юлташ вăрçăччен Вăрнар районĕнче ĕçленĕ. Вăл Сталинград патĕнче çапăçнăшăн «За оборону Сталинграда» медаль илнĕ.

Лейтенант П. ДУБРОВИН.

Йĕпреç МТС-ĕн мухтавлă çыннисем

Йĕпреç МТС-ĕ 1943 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ, тракторсемпе тумалли çулталăкри ĕçсен планне 117,1 процент, комбайнсемпе ĕçлемелли плана 197 процент пурнăçларĕ. МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем çулталăк хушшинче ултă тонна яхăн горючи перекетлесе хăварнă.

Иртнĕ ялхуçалăх çулне ăнăçлă ирттерсе, вăл республикăри МТС-сен хушшинче кăна мар, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухрĕ. Çакă вăл, чăн малтанах, МТС коллективĕ Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи ответлăха туйса ĕçленинчен, МТС руководителĕсем çынсене ĕçе вырнаçтарма пĕлнинчен килнĕ.

Отечественнăй аслă вăрçăн участникĕ П. М. Мельцов юлташ, иртнĕ çул мĕнле ĕçленине аса илсе, çапла калать:

— Эпир тракторсемпе ĕçленĕ чухне талăксене кăна мар, сехете те шутласа ĕçленĕ. Пĕр-пĕрин хушшинчи ăмăрту ĕç тухăçлăхне ÿстерчĕ, пахалăхне лайăхлатрĕ. Пахалăх — ăмăрту условийĕсенче тĕп вырăн йышăнса тăнă. Юлташа пулăшасси — иккĕмĕш услови. Çаксене яланах пурнăçласа пыни çĕнтерÿ патне илсе пычĕ.

МТС директорĕ Г. Н. Ивановпа старши механик П. М. Михайлов юлташсем бригадăсен ĕçне кăна мар, уйрăм трактористсемпе комбайнерсен ĕçне те ялапах контрольлесе тăнă. Кама мĕнле пулăшу кирлине пĕлсе, вĕсене ĕçре кулленех пулăшса пынă. Вĕсен пулăшăвĕ кашни трактористпа трактористка лайăх ĕçленинче палăрчĕ.

А. Н. Терентьева — çамрăк трактористка. Вăл трактор çине вăрçă вăхăтĕнче ларнă. Вăл, иртнĕ çул У—2 маркăллă тракторпа 231 гектар сухаласа, плана 256 процент тултарнă. Çавăн пекех М. М. Михайлова юлташ та иртнĕ çулчен палăрсах тăман. Иртнĕ çул вăл СТЗ тракторпа ĕçлерĕ, плана 316 процент тултарчĕ.

— Пирĕн МТС-ри трактористсенчен нумайĕшĕ вăрçă хирне кайрĕç. Эпир, хĕрарăмсем, трактор рульне тытрăмăр. Çак чыслă ĕçе пурнăçлассишĕн хамăр тантăшсемпе кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлерĕмĕр. Вăрçăри тантăшсем эпир мĕнле ĕçлени çинчен пĕлсе савăнма пултараççĕ,—тет Терентьева юлташ.

П. М. Мельцов юлташ вăрçăран таврăннă хыççăн бригадир помощникĕ пулса ĕçленĕ. Хăйĕн ĕçне чуп-чĕрсрен юратаканскер, вăл тракторне йĕркеллĕ усрать. «Трактор хурçă, анчах вăл тасалăха юратать, вăхăтра çу сĕрни, вăхăтра тасатни, ĕçленĕ чухне йĕркеллĕ тыткалани пысăк вырăн йышăнать, çакă вăл тракторăн ĕçлес вăхăтне тăсать, горючи перекетлеме май парать. Горючи перекетлени — вăрçă хирĕнче боеприпассене перекетленипе пĕрех», — тет Мельцов юлташ.

Унăн опытне, хастарлăхне кура, ăна трактор бригадине ертсе пыма лартаççĕ. Унăн бригади 1943 çулта плана 243 процент тултарнă. Комбайнер П. М. Маркиянов — республикăра хăйĕн хастарлăхĕпе чапа тухнă çын. Унăн сăмахĕ нихăçан та ĕçрен уйăрăлса тămасть. Вăл тракторпа ĕçлемелли плана 154 процент, комбайнсемпе ĕçлемелли плана 370 процент тултарнă. Çав вăхăтрах 120 пăт ытла горючи перекетлесе хăварнă.

Тунă çитĕнÿсем МТС руководителĕсемпе унăн коллективне мăнкăмăллантарса, пуçа çаврăмаççĕ. Кукти çынсем мухтанма юратмаççĕ.

1943 çул вĕçленнĕ тĕле МТС коллективĕ 17 трактор юсас вырăнне 29 юсаса лартнă. Çакăншăн ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 20.000 тенкĕ премии панă.

Хĕрлĕ Ялава алла илнĕ чаплă кун МТС директорĕ Г. П. Иванов юлташ пĕтĕм коллектив ячĕпе тракторсем юсамалли плана февраль уйăхĕнче вĕçлеме сăмах пачĕ. МТС коллективĕ хăйĕн сăмахне чыслăн пурнăçларĕ. 40 трактора, вĕсен çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсене тата комбайн моторĕсене те февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех юсаса лартрĕ. Тракторсене валли запаслă пайсем 16.000 тенкĕлĕх хатĕрленĕ, кивĕ пайсене 28.000 тенкĕлĕх çĕнетсе юсанă.

Ĕнер МТС коллективĕ тата тепĕр савăнăçлă хыпар илчĕ. ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, иртнĕ 1943 çулхи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухса, Йĕпреç МТС-не ăмăртура мала тухнăшăн виççĕмĕш премии памалла тунă.

МТС-ăн тракторисчĕсемпе трактористкисем халĕ ответлă та паха ĕçре — вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине ирттерес тĕлĕшпе вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ. МТС кирлĕ таран горючи тата чуркăсем хатĕрленĕ.

Çак кунсенче унта Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри «Красный путиловец» артелĕн членĕсем чĕнсе каланине сÿтсе-яврĕç. МТС коллективĕ çулталăклăх плана 150 процент пурнăçлама обязательство илчĕ.

Иккĕленмелли çук, Йĕпреç МТС-ĕн мухтава тивĕçлĕ çыннисем, 1944 çулхи ялхуçалăх планне те ăнăçлă пурнăçласа, малта пыракан коллективсем ретĕнче пулĕç.

Е. ЯСТРЕБОВ.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер американсен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Сурçĕр Францири çар объекчĕсене тата Тульне Пакейри нимĕç аэродромĕсене тапăннă. Çавăн пекех тата Хĕвелтухăç Францири икĕ сортировка станцийĕ çине бомбăсем пăрахнă. Малтанлăха илнĕ хыпарсем тăрăх, тапăну ăнăçлă иртнĕ. Тăшман вăйлă хирĕç тăман.

Апрелĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем нимĕçсен Фридрихсхафен хулине питĕ вăйлă тапăннă. Авиацин ытти соединенийĕсем Монпенри (Бельги) тата Ольнуэри (Франци) чугун çул объекчĕсене темиçе хутчен те хаяррăн тапăннă. «Москито» йышши самолетсем Штуттгарт хули çине бомбăсем пăрахнă.

Çак операцисенчен акалчансен 36 самолет хăйсен базисене таврăнман.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн 26-мĕш дивизийĕн чаçĕсем, Югослави флочĕ пулăшнипе, Корчула утравĕ çине (Югослави çыранĕ çывăхĕнче) аннă. 10 сехет хушши пынă çапăçура темиçе ялта тăшман гарнизонĕсене пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн Святой Вит тăвне йышăнса тăнă чаçĕсем паранна. 800 салтакпа офицера хăшне вĕлернĕ, хăшне тыткăна илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ.

Санджакăн кăнтăр пайĕнче Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем хăйсем наступлени пуçласа янă, Мойковапа çĕнĕрен туртса илнĕ.

Черногорире Даниловград патĕнче тăшман колоннине аркатса тăкнă. Тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: пĕтĕм фронтĕпех патрульсем активлă кĕрешнĕ.

БАДОЛЬО ПРАВИТЕЛЬСТВИН РЕШЕНИЙĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Бадольон çĕнĕ правительстви апрелĕн 27-мĕшĕнче хăйĕн пĕрремĕш ларăвĕнче портфельсĕр министрсен Кроче, Сфорца тата Тольятти пана сĕнÿсене пăхса тухса çирĕплетнĕ. Вĕсен сĕнĕвĕсенче çакăн пек виçĕ пункт пур: 1) Италин çар вăйĕсене çирĕплетесси, 2) администрацие фашистсем майлă çынсенчен тасатасси, 3) çĕршыв çулйĕрĕсене, промышленноçа тата ялхуçалăхне йĕркелесе ура çине тăратасси.

Конституцие улăштарас ыйтăва, вăл шутрах монархи кунçулĕн ыйтăвне те, учредительнăй тата законсем кăларакан ассамблейăна суйличчен пăхмалла мар. Пĕтĕм халăх ирĕклĕн сас парса суйланă ассамблея çав ыйтусене халăха кирлĕ пек татса парĕ.

США-н ТИНĔС МИНИСТРĔ НОКС ВИЛНĔ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Паян, чирлесе выртнă хыççăн, США-н тинĕс министрĕ полковник Нокс вилнĕ. Вăл 70 çулта пулнă. Америкăри радиостанцисем пурте Нокс вилни çинчен пĕлтермешкĕн хăйсен программисене пама чарăннă.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЧУНЦИН, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Китай командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 18-мĕшĕнче Япони çарĕсем Хэнань провинцин сурçĕр пайĕнче Цзялу шывĕ урлă каçнă та виçĕ колоннăпа Чжэнчжоу хулипе Минсянь хули патнелле наступлени пуçласа янă. Чжэнчжоу вăл —Бэйпинпа Ханькоу тата Луньхай чугун çулĕсен паха узелĕ пулса тăрать. Китай командованийĕн даннăйĕсем тăрăх, Сурçĕр Хэнаньри операцисенче японецсен 50—60 пин салтакĕ çапăçать. Японецсем хăйсен наступленине авиацие, артиллерипе пулăшса пыраççĕ тата вĕсен танкĕсем те (вĕсем йышлах мар) çапăçусене хутшăнаççĕ. Вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Японецсем те, китаецсем те йывăр çухатусем тÿсеççĕ. Çĕнĕ вăйсем пырса çитнĕ хыççăн японецсем хăйсен наступленине вăйлатса янă, апрелĕн 23-мĕшĕнче Минсянь хулине йышăннă, çак кунсенче Чжэнчжоу хули патне пырса тухнă.

КĔСКЕН

▲ Канада Китайпа договор тунă. Çав договор Канада çыннисен Китай территорийĕнче те Канада законĕсенех пăхăнса тăмалли прависене тата Канада çыннисене Китай çыннисенчен мала хуракан йĕркесене пĕтерсе лартнă. Договорта тата çапла каланă: вăрçă пĕтсен 6 уйăх хушшинче Китайпа Канада правительствисем пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси, суту-илÿ тăвасси çинчен, тинĕссенче ишсе çÿресси çинчен тата консулсен прависем тĕлĕшпе договор тумалла.

▲ Флоренцире фашистла партин паллă деятелĕсенчен пĕрне Джованни Джентилене вĕлернĕ, вăл çутĕç министрĕ пулнă.

Ответлă редакторăн ĕçĕсене тăвакан П. Н. НИКОЛАЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —3—23.

НТ 00113 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Закă. №2 Ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.